# Кузнецов И. Çăлтăртан та çутăрах

Хусанкайпа эпĕ 1920 çул пуçламăшĕсенчех паллашнă. Шупашкара Хусантан килнĕ çамрăк студента Хусанкай Петĕрне эпĕ, рабфакра вĕренекенскер, малтанлăха çакнашкал куртăм: хура кăтра çӳçлĕ, тĕрленĕ чăваш кĕпипе, йӳле ярса çыхнă пиçиххипе, вĕр-çĕнĕ çăпатапа… Çавăн хыççăн эпĕ вăл «Сунталра» е «Канашра» мĕн кăларнă çавна пĕр сиктермесĕр вуласа пытăм. Малтанхи сăввисенчен ирĕке тухнă тимĕрçĕ мăлатукпа сунтала хавассăн шаккаса ĕçлени çинчен çырни питĕ кăмăла кайнăччĕ, эпĕ ăна пăхмасăр калама та вĕреннĕччĕ. Каярахпа, аслă шкулсем пĕтернĕ хыççăн, иксĕмĕр чăваш писателĕсен съездĕнче тĕл пулнăччĕ... Паллах, эпĕ пусĕпех историк сукмакĕпе кайнине пула, илемлĕ произведенисем çырма пултарайман. Çапах та хамăр социализм тăвас çул çинче час-часах тĕлпуллашса пынă. 1934 çулта СССРти писательсен пĕрпĕтĕм Союзне тунă вăхăталла Шупашкарти съездра Мускавра чăваш хаçачĕн корреспондентĕнче ĕçлекен П. Хусанкай та пулнăччĕ. Туслаштараканни тата вăл та истори наукипе тимлĕ интересленни, чăваш историне тĕпчениине кăмăллани пулчĕ...

Ун кăмăлне хавхалантарса, чун-чĕре ĕмĕтне çĕклентерекенни 20-мĕш çулсенчех Хусанта курнăшнă В. В. Маяковский пулнă. Унăн поэтла пултарулăхĕнчен вăл сăвви-кĕввисенчен те ытларах унăн хăюлăхне, яр-уçăнкă, пат-тӳрĕ чăнлăх мелне килĕштернĕ. Пĕр вăхăтра ăна С. Есенин та витĕм кӳнĕ, анчах нумайлăха мар.

Халĕ тесен, Хусанкайпа Митта пек пăшăрханууллă яш-кĕрĕм 20-30-мĕш çулсенче пĕр чӳхенӳсĕр, пĕр иккĕленӳсĕр поэзи çулĕ çине тухма пултарайманни каламасăрах та паллă. Ун чухнехи çулсенче чăваш ялне епле çĕнетсе пырас ыйту тавра националистла тĕтреллĕ çанталăк пĕрĕхтерсе тăнă: чăваш халăхĕ çĕр сахал пирки пуçне çиетех тесе ĕнентерме хăтланакансем, Милли пек, вырăс культури чăваш культурине пĕтерсе пырать тесе павракансем те пулнă. Ун пеккисем вăл вăхăтра уйрăм коммунистсене те минреткелерĕç. Çавăнпа çав тапхăрта ăраснах куçкĕрет хирĕç тăракан тăшмансене тăрă шыв çине кăларни кăна мар, халăх майлă пек пулса ăна аташтарса яма хăтланакансене питлесе тишкерме те пĕлсе, халăх ĕçне хастаррăн хутшăнса, аслă Ленин пехиллесе хăварнине пурнăçа кĕртсе пыма вĕренмелле, хăнăхмалла пулннă.

1958 çулта Петр Петрович чăваш писателĕсен съездĕнче «Поэтсен пысăк ăсталăхĕшĕн» ятлă доклад туса пани халĕ те асрах-ха.

–Сăнарлăрах калас пулсан, – терĕ вăл сăмах майăн, – чăваш поэзийĕн пĕлĕт тӳпинче икĕ çап-çутă çăлтăр йăлтăртатса тăраççĕ: пĕри – Константин Иванов, тепри – Çеçпĕл Мишши. Çав çутă кӳрсе тăракан çăлтăрсен таврашне хăш ытти çăлтăрсем çитнĕ-ха?

Хăйĕн докладĕнче вăл, çав виçепе чакăштарса теме пулать, чапа тухма пуçланă поэтсен ăсталăхĕнчи çитменлĕхсене вирлĕн, ĕненмелле, ăса илмелле тишкерсе кăтартрĕ. Тиркешӳ-мĕнĕ курăнмарĕ, çамрăкраххисене вĕрентсе килентермелле калаçрĕ.

Тен, кашниех чухласа илеймерĕ те пулĕ: çав тапхăрта ĕнтĕ Хусанкай хăй асăннă çăлтăрсем патне çывхарса пынине вырăсларан чăвашла ăста куçарса та, чăвашларан вырăсла куçарса та (сăмахран, К. Ивановпа Çеçпĕл произведенийĕсене Чăваш наука тĕпчев институчĕ хатĕрлесе кăларнă кĕнекесенче) пуръенлĕн кăтартса пачĕ.

«Владимир Маяковский» ятлăччĕ унăн пĕр поэми. Унта вăл Совет Союзĕнчи писательсен пирвайхи съездне асăнса çапла çырнăччĕ:

«Пуçтарчĕ пур вăя пĕрле.
Совет культури – пĕр экспресс,
Малашлăха юртса кĕрлет.
Литература аслă вăй,
Ялан вăл çав экспресăн пуçĕ.
Пĕр пăравусĕ – Горький хăй,
Тепри ун Маяковский пулчĕ.
Нумай чĕлхеллĕ мăн хорта
Эп те пĕр пĕчĕк сас пулсассăн,
Паян эп уççăн палăртап:
Вăл Маяковский лартнă сассăм...
Ăна куçарнă хушăра
Эп пурнăç таппине ăнкартăм,
Çĕршыв ĕçне, пур йывăра
Йăтса пымаллине ăнлантăм...

Çакна май тата тепĕр пулăма асăнмасăр иртсе кайма юрамĕ. Вăл – асăннă съезд вĕçленнĕ хыççăн П. Хусанкай ытти чăваш делегачĕсемпе пĕрле А. М. Горький дачинче хăнара пулни.

А. М. Горький килĕнче хăнара пулнине П. Хусанкай кайрантарах акă мĕнле аса илсе çырнă:

«Писательсен съездне хупсассăн,
Вăтăр тăваттăмĕш çулта,
Çак кил-çурта эпир хавассăн
Пуçтарăнтăмăр банкета...

Нимрен ытла асран каймарĕ
Эп Горькипе пĕрле пулни...
Паллах: çынсем, ăçта ларсан та,
Пырасшăнччĕ ун патнелле.
Эп те ун çывăхнех пырсаттăм
Сиксе тапан чĕрепеле.

Ун аллине алла тытассăн,
Калассăм килчĕ ман веçех...
Кĕске самант хушши мĕн калăн?
Каларăм халăх ятне çех.
Чăвашсенчен эп сывлăх сунтăм.
Хуллен тав турĕ вăл мана...
Ун умĕнче хама эп куртăм
Шкулти ача пекрех кăна...

Унтан тсмле аван та çăмăл,
Темĕскере çĕнтересле,
Çунат хушса çĕкленчĕ кăмăл -
Вĕрен, шыра, тĕпче, ĕçле!..
Ялан ăна сапла эп курăп –
Чĕррисемпех, чĕр халлĕнех.
Мĕн виличчен асра эп усрăп
Ун ăшă пиллĕ аллине».
(Чĕре юрри, Ш., 1952, 93-94 с.)

1936 çулхи çур кунĕсенче Н. И. Полоруссов-Шелепие чăваш правительстви пуçласа халăх сăвăçĕн ятне пачĕ. Ун чухне Николай Иванович 55 çул тултарнăччĕ. Çав уявра чăваш правительстви членĕсем те, писательсем те, художниксемпе композиторсем те пулчĕç. Уйрăмах ку вăхăтра «Канаш» хаçатра Хусанкай «Шелепийĕн шерепи» ятлă поэма çырса кăларни аса килет. Çитменнине тата ăна Тагаев-Сурбан художник йышлă писательсен парадне кăтартакан ӳкерчĕкпе илемлетнĕччĕ. Хусанкай унти кашни поэта тенĕ пек уйрăммăн асăнса хаваслантарнăччĕ.

1936 çулта Чăваш республикине Ленин орденĕпе наградăланă хыççăн партин Тĕп Комитетне тавтуса, пĕтĕм чăваш халăхĕ ячĕпе çыру çырас кăмăл çитĕнчĕ. Ăна хатĕрлеме ăстарах сăвăçсене обкома пуçтарса калаçнăччĕ. Хусанкая, Шупуççыннине тата Ухсая Ильинкăри кану çуртне ярса ĕçлеттерме йышăнтăмăр. Унта вĕсем виçĕ эрнене яхăн пурăнчĕç. Ăсталăхĕсем пĕр шайлă пулайман пирки сăвăласа çырасси пĕтĕмпех Хусанкая тиврĕ. А. Жаровпа Д. Алтаузен поэтсем ăна çийĕнчех вырăсла куçарчĕç те, аслă органсем пăхса тухнă хыççăн тата тĕплĕрех тишкерме, халăх кăмăлне хисепе илме, типографире (проектла) пичетлесе республикăри пур заводсемпе колхозсене, ĕççыннисен коллективĕсене ярса памалла турĕç. Хапăллакансене çыру вĕçне алă пусма ирĕк пама йышăнчĕç. Агитаторсемпе пĕрле сăвăçсем хăйсем те халăх хушшинче пулса вуласа çӳрерĕç. Çав çыру айне пӳрĕ 239342 çын алă пусни курăнчĕ.

Пурте пĕр кăмăллă пулса Çырăва Тĕпкома И. В. Сталин ячĕпе янăччĕ. Ытти халăхсен çырăвĕсемпе пĕрле Илемлĕ литература издательстви те уйрăм сборнике кĕртсе пичетленĕччĕ.

«Коммунар» хаçат Мускаврa тухма пăрахсан, Хусанкай каллех Шупашкара таврăнчĕ. Эпĕ ВКП(б) Чăваш обкомĕнче ĕçлеттĕмччĕ. Районсене тухса çуренĕ чухне ăна эпĕ час-часах фордик çине лартса пĕрле илсе каяттăм. Ыттисенчен ытларах та теме пулать.

1936 çулхи январьте ударник-колхозниксем Горький: крайĕнчи съезда йĕлтĕрпе тухса каяс умĕн Хусанкай вĕсем валли «Йĕлтĕрçĕсен маршĕ» ятлă сăвă çырчĕ. Ăна С. Максимовпа В. Воробьев композиторсем çийĕнчех кĕвĕлесе юрра хыврĕç.

Вăл вăхăтра районсене кăна мар (сăмахран, Болгарирен килнĕ хăнасемпе пĕрле Елчĕк районĕнчи колхозсемпе паллашнă чух) пĕрле тухса çӳреттĕмĕр, Мускаврa та иксĕмĕр темиçе хутчен пĕрле пулнă. Кунта Хусанкай мана хăй туслашнă çынсем патне экскурсовод пек ертсе çӳретчĕ. Унпа пĕрле эпĕ Т. С. Кривов патĕнче çĕр выртмаллах хăнара пулнăччĕ. Америкăран Тăван çĕршыва таврăннă Эрзя художникпа та мана вăлах паллаштарчĕ, кайрантарах Хусанкай çинчен доктор диссертацийĕн монографине çырса пичетленĕ М. Фетисов хваттерĕнче те, И. Я. Яковлев мăнукĕ Ольга Алексеевна патĕнче те пĕрлех пултăмăр. Олга Алекссевна патĕнче сăмах puринчен ытла Иван Яковлевичпа Алексей Ивановичран юлнă историлле пуянлăха упрамалли, алçырусемпе материалсене Шупашкарти наукăпа. тĕпчев тата педагогика институчĕсене ĕмĕрлĕхе парса усрамалли çинчен пычĕ...

Шупашкарта йӑлана кӗнӗ уявсенче кӑна мар, Болгарирен килнӗ хӑнасене (Лайара, Ангел Тодорова т. ыт. те) йышӑннӑ чух та (е мӑшӑрпа е пӗччен) эпӗ Хусанкайсем патӗнче (амӑшӗ сывӑ чухне те) тӗлпулмасӑр, юратнӑ юрӑсене янратмасӑр иртмен. Петӗр хӑй сӑра-эрех пӗр тумлам та ӑша ямастчӗ, юрлама вара ӑстаччӗ, чӑваш халӑх юррисене нумай пӗлетчӗ.

1972 ҫулта пичетленсе тухнӑ «Чӑваш совет литератури» кӗнекере П. П. Хусанкайӑн пурнӑҫӗпе ӗҫӗ-хӗлӗ тата пултарулӑхӗ ҫинчен М. Я. Сироткин тӗплӗ ҫырнӑ (253-277с.) Унта вӑл поэт пӗр вӑхӑтра инкеке лекнине те асӑнмасӑр иртсе кайман.

«Хусанкайӑн, – тенӗ статьяра, – хӗрӳллӗ ӗҫрен сасартӑк. татӑлма килсе тухать. 1938 ҫулта ӑна, халӑхшӑн ют шухӑшлӑ произведенисем ҫырать тесе, айӑплама тытаннӑ, хупса хунӑ. Анчах ку элек пулнӑ. 1939 ҫулта суд поэтӑн ӗҫне пӑхса тухать. Унӑн айӑпӗ пулманнине кура, ӑна ирӗке кӑлармалла тӑвать. Поэт пӗр хушӑ сывалса пурӑннӑ хыҫҫӑн каллех хӑйӗн юратнӑ ӗҫне тытӑнать» (256 с).

Ҫав инкек Хусанкая хӑш таврaран (камсенчен) килсе ҫитнине манӑн хам куҫпа курса, хам хӑлхапа итлемелле пулчӗ...

Эпӗ Ҫурҫӗр енчен Шупашкара таврӑнас умӗн Хусанкай, Митта Ваҫлейӗ пекех, ман пата ҫыру ҫӳретме пуҫларӗ. Вӗсем иккӗш те эпӗ таврӑнасса кӗтеҫҫӗ иккен. Анчах Петр Петрович кӑшт асӑрханарах, пӑшӑрханарах ҫырнӑ пек туйӑнать. Кунта эпӗ пӗр ҫыруне ҫеҫ илсе кӑтартасшӑн. Ӑна вӑл 1955 ҫулхи октябрӗн 18-мӗшӗнче Мускаври Аслӑ литература курсӗнчен (хӑй вӗреннӗ ҫӗртен) ҫырса янӑччӗ. Акӑ унӑн йӗркисем.

18. Х. Ҫырӑву ҫитрӗ, Иван, хавхаланса ҫунни туйӑнать. Унсӑрӑн тӗнчере пысӑк ӗҫ пулман. Ӗлӗкхи вӑй-хӑвату таврӑннӑ пекех куратӑп сана. Ҫак пӗчӗк ҫырӑва рентген черетне кӗтсе ларнӑ чух ҫыратӑп. Сывах мар, тусӑм! Тӗтреллӗ-мӗнлӗ анализсем пуҫланчӗс. Ку юрӗ-ха. Ӗнер кӑна Ислюковпа курӑшрӑм. (Сочирен таврӑнать). Чылай калаҫса лартӑмӑр «М» (Мускав) хӑна килӗнче. Сан ҫинчен тапратрӑмӑр. Ӗлӗкхи шухӑшнех каларӗ: ун вырӑнӗнче пулсан, ҫине тӑрса (воинствующе! – ҫак сӑмах пулчӗ ун) Шупашкара пырӑттӑм, терӗ. Ӗҫӳ пирки – тӗпчев институтне вырнаҫтармалла пулать пулӗ, терӗ. Халлӗхе унта ҫӗнӗ директор Любимов Вас. Ник., ученый секретарӗ Димитриев Вас. Дм. (ҫамрӑк историк, кандидат). Афанасьева ялхуҫалӑх инст. директорӗн ҫумӗ (зам.) тунӑ-мӗн.

Ҫыруна илтӗм те шухӑша кайрӑм: 3000* тенкӗ сахалах укҫа мар (хамӑра кура). Саплаштарайӗҫ-ши? Хваттер пирки те чӑкӑлташрах пулмӗ-ши? Премьер**

кунта çав çурт-йĕр тăвас ыйтупа татăклă калаçса татăлтăм терĕ те-ха... Санăн, хăвăн тивĕçлĕхне сыхласа, пат тӳрĕ калаçса пăхмалла пулĕ хамăр аслисемпе? Эпĕ Ислюкова сана Тĕпком урлă чĕнсе илес шухăша та каларăм. Халĕ (анчахрах) Ахазов Сочине кайнă-мĕн. Мускавсем сана çĕклесен, аптрамăттăмăр-ха та... Халлĕн, евчĕсĕр-мĕнсĕр тенĕ пек, тӳрех çырса пăхмастăн-ши Шупашкара, хваттер, вырăн, çавăн чухлĕ минимум укçа уйăхсерен тивĕçтерме (тейĕпĕр!) гаранти паратăр-и? – тесе çырмалла мар-ши? Каллех темшĕн Мускава ытларах шанас килет. Эрне, 20 çула яхăн вăхăтра тĕнче те, истори те нумай урăхланчĕ: меслет те, ăслай та улшăнать. Сăмах майăн гуманитарлă ăслăлăхсен кандидатсем – ытлашши (ниçта чикме çук) тенĕ хыпар çӳрет. Эсĕ, паллах, 1-2 çултан доктор пулмалли çын. Ку вара пĕтĕм вăхăтна ыйтать.»

Кайрантарах тин пĕлтĕм-ха, 1955 çулхи август уйăхĕнче парти чăваш обкомĕнче мана реабилитацилес ыйтăва пăхса тухас умĕн Хусанкай парткомисси ячĕпе çакăн пек çыру та çырнă:

«КПСС Чăваш обкомĕ умĕнче эпĕ хам енчен çакна палăртса пĕлтермеллех тесе шутлатăп: Кузненов юл. студент пулнă çулсенчех, уйрăмах тата хăй парти обкомĕнче ĕçленĕ вăхăтра, национализмла нигилизма хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе питĕ пысăк ĕç турĕ. Уйрăммăн илсен, вăл çамрăк писательсене ют витĕмрен хӳтĕлес тата искусствăра ĕçлекенсене шухăш-кăмăл енĕпе совет патриотизмĕпе социализмла реализм принципĕсене тытса пыртарас енĕпе çав тери нумай вăй хучĕ».

1955 çулхи кĕркунне Хусанкайăн В. И. Ленин çинчеи çырнă «Горкăри çурт» поэми вырăсла çапăнса тухрĕ Октябрĕн 6-мĕшĕнче (Мускавра чух) вăл мана çав кĕнекене çакăн пек автографпа парнелерĕ.

«Ивану Даниловичу Кузнецову с искренним пожеланием – вписать новую страницу в историю нашего народа, дабы грядущий поэт достойно воспел твои деяния

*Ку манăн ун чухне тайгара нефть шыракан геолог партинче ĕçленĕ чухнехи уйăх ĕçукçи.

**С. М. Ислюков ун чух Чăваш АССР Министрсен Совечĕн председателĕччĕ.

В ряды Егорова, Бичурина, Яковлева, Иванова, Сеспеля!.. За всестороннее проявленне национального гения под животворным знаменем Ленина! П. Хузангай».

КПСС Чăваш обкомĕ чĕнсе янипе эпĕ 1956 çулхи февраль пуçламăшĕнче çемйипех Шупашкара куçса килтĕм те малтанлăха Писательсен союзĕнче

консультантра, кĕçех Чăваш АССР кĕнеке издательствин директорĕнче ĕçлеме пуçларăм, истори наукисен кандидачĕ ятне илнĕ хыççăн,. 1958 çулта, Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи Наука тĕпчев институтне куçрăм. Унта пулнă-и, кунта-и, Хусанкайпа кирек ăçта та час-часах курнăçнă, пĕр сĕтел хушшине ларса та ĕçлемелле пулчĕ. Вăл хăй çырнисене уйрăм томсене пуçтарса кăларма тытăннă май пушшех те. Петр Петрович Чăваш АССР Писательсен союзĕн правленийĕн председателĕ пулнă çулсенче мана та правлени членне суйланăччĕ, «Тăван Атăл» редколлегийĕн членĕ пулнăччĕ. Тепĕр енчен тата «Чăваш АССР историйĕн» малтанхи кăларăмне хатĕрленĕ чухне мана редакци комиссийĕн председателĕ тунăччĕ. Хусанкай çав комисси членĕн ĕçĕсене пурнăçа кĕртсе пычĕ.

1964 çулта Хусанкай мана хăйĕн «Ăсталăхпа чăнлăх» кĕнекине «И. Д. Кузнецова. Аптраманлăх ячĕпе, ĕçлĕпĕр-ха ерипе...» тесе çырса парнелерĕ.

Ăна эпĕ васкамасăр, шухăша кайса, киленсе вуласа тухрăм. Унтанпа чĕрĕк ĕмĕре яхăн иртнĕ пулсан та, «Ăсталăхпа чăнлăх» кĕнекере каланă шухăшсем паянхи чăваш литературине те çав халлĕнех, тӳрремĕнех пырса тивеççĕ. Чи малтанах Хусанкай акă мĕн асăрхаттарса палăртать: «Пушкин пĕр çырăвĕнче çапла çырать: «Пирĕн, чăвашсен. критика çук, тет. Аслă поэт ун чухнехи вырăс литераторĕсене мĕншĕн чăваш тенĕ пирки шарламăпăр. Пире ăна ăнлинни те çитĕ... Анчах пирĕн, чăн чăвашсен, çав критика чăн та çукрах вара...»

Унтан пысăк туйăмлă, çивĕч ăслă та хăватлă талантлă чăваш поэчĕ çак шухăшсем патне пырса тухать: «Писателĕн хăй çырнă япала çинчен татăклă сăмах илтес килет: хăйĕн шухăш-кăмăлĕпе, ăсталăхĕпе мĕнле вырăнта тăнине пĕлсе, малалла епле ӳссе пымаллине тавçăрса, пулас çул-йĕрне уççăн курасшăн çунать вăл. Вулаканăн хăй вуланă кĕнекене лайăхрах ăнланса илес килет...

«Çаксене тума критик пулăшмалла. Критик пире, хамăр ăшра кăна илĕм-тилĕм çутă пек палăракан кăмăл-туйăма çиеле кăларса, ăс куçĕпе курма вĕрентмелле: эпир ят хурайман сисĕме хăй çеç тупнă пĕртен-пĕр тĕллĕ сăмахпа палăртма пĕлмелле. Вăл пур жанрсенче те килти пек пулмалла: хăш кĕтесре мĕнле япала выртнине, вăл майлипе майсăррине, кирлипе кирлĕ маррине «алăк уçса кĕрсенех» курмалла, мĕншĕн тесен ырă çуртра пĕр пукан ларсан та, пĕр чаршав çӳçи ситрĕлсен те, кил-çурт тирпейĕ пăсăлать, килхуçи пуçтарусăрри палăрать.

Кĕскен каласан, пире хамăртан нумай çӳлте тăракан, сăмахĕ-шухăшĕпе пирĕн чун тĕпнех вырнаçакан критик кирлĕ. Ăсхакăл хуçи кирлĕ пире.»

Хăшпĕр поэтсен произведенийĕсенчи çитменлĕхсемпе йăнăшсене уççăн та тÿрремĕн, ыр сунса тишкернĕ хыççăн Хусанкай çакăн пек пĕтĕмлетÿ тăвать:

«Чăваш поэзийĕн культури пĕчĕкçĕ мар, Федоровпа Иванов хыççăн, Çеçпĕлпе Элкер хыççăн эпир вăйăн-шайăн ĕçлеме пултараймастпăр. Ун пек тивĕç никамăн та çук: ваттин те, яшшин те, ятлин те, ятсăррин те...»

Питĕ вирлĕ, питĕ кирлĕ сăмахсем. Чăвашсен культури (уйрăмах – илемлĕ литератури) пĕтĕм совет халăхĕн пĕтĕмĕшле культуринче кăна мар, пĕтĕм тĕнчери прогрессивлă этемлĕх культуринче те хăйне тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла – ак ăçталла талпăнать Хусанкайăн пысăк ĕмĕтлĕ чун-чĕри, унпа пĕрлех хăйĕн мĕнпур ĕçĕ-хĕлĕ, ăста тимĕрçĕлле шаккавĕ. Унăн малĕмĕтлĕхĕ Ленин вĕрентсе пехилленипе те, пирĕн партин хальхи ĕçсен çулĕпе те симфонилле килĕшÿллĕ.

Хусанкай хăйне хăй Чăваш патшалăхĕн гражданинĕ тесе çеç хисеплемен: эпĕ – Россия гражданинĕ, аслăран аслă Тăван çĕршыв – Совет Союзĕн гражданинĕ тесе мухтаннă, хĕпĕртенĕ. Вăл чăваш çÿпçинчен тухса çитеймен «патриот» е ячĕшĕн çеç интернационалист пулман, чăн-чăн совет патриочĕ, Çеçпĕл пилленĕ хурçă кĕпере хывса пиçĕхнĕ интернационалист пулнă.

ИСТОРИЕ (чăвашран) миçе ят кĕрсе юласса эпир пĕлместпĕр: пысăк ăстасене çĕршер çулсен виçипе виçеççĕ...Чĕлхен пуласлăхĕ çинчен, поэзин малашнехи культури çинчен калаçнă чухне эпир М. Ф. Федоровпа К. В. Иванова тивĕççĕр хăвармасăрах чи малтан Çеçпĕле аса илетпĕр. Çеçпĕл шкулĕ пире тĕнче поэзине хамăрăн тума, хамăра та тĕнчене тухма май пачĕ», – тенĕ Хусанкай. Çавăнтах вăл, Я. Яковлев калашле, «пирĕн çĕршывра çав çул – хăватлă вырăс чĕлхи» тесе çирĕплетнĕ.

1966 çулта эпĕ утмăлă çитнĕ тата хăй те çавăнталла çывхарса пынă май Петр Петрович «утмăлтисем» ятлă сăвă çырса кăларнăччĕ. «Коммунизм ялавĕ» хаçат мана асăнма манса хăварнăшăн кăштах кÿреннĕ пек пулса, вăл мана «Литературная Россия»хаçатра вырăсла тухнă сăввине парнелерĕ. Ăна поэт «Моему соплеменнику доктору исторических наук И. Д. Кузнецову» тесе мана ятранах халаланă иккен те, ун çумне:

«Чăвашсем ятна лартмарĕç,
Вырăссем – пит хăрамарĕç...

Хам çуралнă кун – 22.1-68 П. Хузангай», тесе алă пусса хушса çырса пачĕ.

Сăвăра утмăл çул çеç пурăнни çителĕксĕррине астутарни те пурччĕ. Анчах 1970 çул пуçламăшĕнче пирĕн иксĕмĕрĕн те йывăр чирлесе больницăна выртма тиврĕ. Хире-хирĕç ларса калаçнă чухне вăл хăйĕн пĕр ĕмечĕ тулса çитменни

çинчен пăшăрханса калаçатчĕ. Çав ĕмĕт – чăваш халăхĕн мĕн авалтан пуçтарăннă фольклорне шĕкĕлчесе-тĕпчесе, унăн историллĕ тымарĕсене, кунçулне, тĕплĕн те яр-уççăн эпопейăлла çутатса парасси. Паллах, кунта «Тилли юррисене» ытарма çук ăслăлăхлă, пысăк ăсталăхпа ўкерсе пани вулакансене хаваслантарнинчен пуçне, ăна хăйне те хавхалантармасăр пултарайман ĕнтĕ.

Петĕр Хусанкай çуралнă кун, январĕн 22-мĕшĕнче, эпĕ унпа ыталанса чуптуса сывпуллашрăм та ўпкене операци тутарма Мускаври Боткин больщцине тухса кайрăм. Хирурги сĕтелĕ çине вырттарас умĕн кĕçех П. Хусанкайпа С. Ислюков больницăран янă тслеграммăна илтĕм. Унта: «Ну, Иван, паттăр, чăтăмлă пул, ан парăн, часрах сывалма сĕнетпĕр», тесе кăна çырнăччĕ. Çавăн хыççăн нумай та вăхăт иртмерĕ, телефонпа шăнкăравласа чĕрене çурса яракан хурлăхлă хыпар пĕлтерчĕç: Петĕр Хусанкай пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнă... Шăла çыртса итленĕ самантра эпĕ: некролог айне ман хушамата кĕртме ан манăрччĕ, тесе çеç калайрăм...

Петĕр Хусанкая эпир чăн тивĕçлипех чăваш халăхĕн хăватлă таланчĕ тетпĕр. Кунпа пĕрлех эпĕ ăна мĕн астунăранпах ырми-канми ĕçчен пулнине пĕлетĕп. Нихçан та вăл вăхăта усăсăр сая ямастчĕ, канăвне мĕн те пулин тепĕр киленмелле ĕçре тупатчĕ, кирек хăçан та хамăр аслă Тăван çĕршыв хуçи туйăмĕпе пурăнатчĕ. Совет Союзĕнчи тĕрлĕ вырăнсенче е урăх çĕршывсенче курса çўренĕ чухне те вăл вăхăтпа питĕ перекетлĕ усă курма пĕлнĕ, ырă кăмăллă çынсемпе курăшса, вĕсемпе çывăххăн туслашма тăрăшнă. Чăнах та, ăçта кăна çитсе курман пулĕ вăл – Куба таранах...

Чаплă поэт çырнисен пуххисене е ытти кĕнекисене алла илсе пăхсан, тем тĕрлĕ ярăмсем те ун пурнăç çулĕ çинчи çап-çутă маяксем пек йăлтăртатса тăраççĕ. Унăн «Çĕрйĕркелў» е «Магнитту», Баку комиссарĕсем çинчен çырнă «Çирĕм улттă» е «Тăван çĕршыв», «Аслă туслăх» поэмисене, «Аптраман тавраш» сăвăллă романне е аслă çулпуçăмăр Ленин çинчен кăмăл тулли савăнăçпа шăратнă сулмаклă сăввисене тытатпăр-и, – вĕсем пурте Хусанкай чăвашсен ĕлĕкрех çуралнă чăваш классикĕсенчен – К. Ивановпа Çеçпĕл Мишшинчен вĕренсе пырса хальхи чăваш поэзийĕн чи çўллĕ шайне çекленнине ним иккĕленмелле мар çирĕплетсе параççĕ.

Астăватăп-ха, бурят писателĕсен Улан-Удэре тухса тăракан «Байкал» журналăн 1969 çулхи виççĕмĕш номерĕнче Хусанкайăн «Ленину – вождю, человеку» поэми çапăнса тухнăччĕ. Августăн 12-мĕшĕнче Петр Петрович мана çак журнала асăнмалăх парнелесе панă чухне çапла çырнăччĕ:

«Тимрĕç Иванне.
Ленинăн ятне
Ĕмĕр-ĕмĕрех
Усрар чĕрере!
П. Хусанкай».

Вулакан тавçăрать ĕнтĕ, пирĕн аслă поэтăмăр çак сăмахсене ăнсăртран çырман. Унăн ăсхакăлĕ, чун-чĕре вăй-халĕ пуринчен ытла В. И. Ленин çырнисене тĕплĕ вĕренсе ăса илнипе, Российăри халăхсен тата чăваш халăхĕн авалтанхи историне пĕр-пĕринпе тачă çыхăнтарса тимлĕ тĕпченипе, хăй ĕçĕнче историн кучухнехи саманара кирлĕ урокĕсене çирĕп асра тытса тăнипе иксĕлми пуянланса пынă.

Калас пулать, Петĕр Хусанкай таланчĕ ытти чăваш писателĕсенчен пуринчен те ирттеререх çĕкленсе пычĕ. Поэзи ăсталăхĕпе çеç мар, чăвашла та вырăсла та питĕ ăста çырма пултарнипе кăна та мар, чылай халăхсен поэзи произведенийĕсене чăвашла куçарас ĕçре те, хăйĕн хăватлă талантне чăн-чăн совет патриотне, çулăмлă интернационалиста тивĕçлĕн аталантарса пынипе те, пурнăçри кăткăс ыйтусене марксизм-ленинизм куçкурăмĕ витĕр çутатса, философи шайне çити хăпартса тĕрĕс татса пама пĕлнипе те чăваш литературинче ĕмĕр сÿнми палăрса юлчĕ.

*Тăван Атăл. – 1987. – № 1.  – С. 60-63.*